УХСАЙ ЯККӐВӖ

# САЛТАК КӖНЕКИ

47-25
3910



ЧӐВАШГОСИЗДАТ · 194[illegible]

УХСАЙ ЯККĂВĔ

# САЛТАК КĔНЕКИ

*Сăвăсем*

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР
Абонем. ящ. № 25.

ЧĂВАШГОСИЗДАТ
Шупашкар—1947

Редактор А. Э. ХЕЛЬ.

НТ 00470. Подписано к печати 6/III 1947 г.
Заказ № 95. Тираж 3.000 экз.

Типография № 1 Управления полиграфпромышлен.
при Совете Министров Чувашской АССР.

## ШĂЛЛĂМ

*Гамлет*

*Сана итлетĕп эпĕ.*
***Ашшĕн мĕлки***
*Итленĕ хыççăн эсĕ тавăр.*
***В. Шекспир.***

Çамрăк уйăх пĕлĕт витĕр
Çутă хĕç пек тухрĕ те,
Шевлисем вĕçĕ-хĕррисĕр
Сарăлчĕç çеçенхирте.
Çулçипе те çупăнмасăр,
Айăхланă топольсен
Çĕр çине йăванчĕç сассăр
Кукăр-макăр мĕлкисем.

Çапăçу хĕрсе—кĕр те кĕр!—
Кĕрлесе кайса иртсен,
Уйăхлă, таса хитре çĕр
Килнине шанма та хĕн,—
Генерал-майор приказĕ

Пирĕн корпус штабĕнчен
Тухиччен, кăвар çĕр касĕ
Тупăсен кĕпçисенче.

Çĕмĕрт айĕнчи сив танкăн
Башнинче хуллен-хуллен
Ăйăхăм тутланнă майăн
Хам сисмесĕр тĕлĕрсен,
Умăмри хире пĕркенĕ,
Мăкăрланнă тĕтĕмрен
Тухрĕ çын,—иртни-иртмен-и
Çулĕпе вăл çирĕмрен.

Ман ума пырать йĕркеллĕ,
Салтакла пырать чипер,
Тăп-тăп хулăм кўлепеллĕ,
Кивĕрех шинеллĕскер.
Пăхкалать вăл кăшт вăтаннăн,
Хăяйман пекех темле...
Эсĕ-çке, тăван-тăванăм,
Чунăм, шăллăмçăм, Кирле!

Харсăр та хăюллă пынă
Эсĕ вăрçă вутĕнче,
Çапăçса пĕлтĕр пуç хунă
Эсĕ Ельня хулинче.
Килĕмрен инçе хăпарчĕ
Пĕчĕкçĕ кăна тăпру,—
Хуйхăллă хыпар пĕлтерчĕ,
Йăмăкран килсе, çыру.

Вуласан, чĕтрерĕ аллăм,
Вăрçари инкек-синкек
Чĕрене тӳссе чăтмалăх
Хытарсан та, ача пек
Макăртăм, хĕвел çутти те
Украина уйĕнче
Çуллахи шур пĕлĕт витĕр
Сивĕ пăхнăн туйăнчĕ.

Шăллăмçăм, санпаччĕ иккĕн
Пĕр тăван хура ача,
Çырлана та кайнă иккĕн,
Сухана та кайнă иккĕн,
Кирлĕ пек санпа ачаш
Калаçма пĕлмерĕм пулĕ,—
Пиччӳне мухтантарса
Ӳсрĕн анлă хулпуççиллĕ,
Ӳсрĕн паттăр та таса.

Çуралса, кĕреш пек, хамăр
Ӳссе савнă таврана
Таврăнса, тăванăм, сансăр
Тунсăхлана хапхана
Тăлăххăн яри-яр уçăп,
Сарлака килкартине
Сансăр кĕрĕп,—мăшăр куçăм
Куççулленĕ унчухне.

Каласси тата ман пурччĕ;
Шăллăмçăм аллисене

Çĕклесе сасартăк пӳлчĕ.
Йăпăрт-япăрт шинельне
Вăл йӳле ярса çӳрерĕ
Манăн танкăм умĕнче:
—Халĕ ĕнтĕ иккĕн,—терĕ, -
Халĕ иксĕмĕр, пичче!

—Вăрçă умĕн каллĕ-маллĕ.
Çĕршывра нумай, нумай
Савăнăçлă та илемлĕ
Çаврăнса çӳренĕ май,
Эсĕ пулнă-тăр йăмраллă
Ельня ятлă хулара,
Мускавран тăватçĕр аллă
Е ытла-и çухрăмра.

Иртнĕ çул унта, пиччемĕм,
Августра, пĕр ирхине,
Шур тĕтре çĕклем-çĕклемĕн
Йăвансан окоп çине,
Чакаксем тем сиснĕ евĕр
Вăранайнăччĕ кăна,
Кайрăмăр пĕр пĕкĕнмесĕр
Штурмăллă атакăна.

Сарлака, хитре Шуратăл
Тулхăрса пĕр çĕкленсен,
Хум хумран юлать-и катăк,
Татăлать-и тепринчен,—
Талпăнса вĕçес пек пытăм,

Ӳкрӗм эпӗ урараn,
Кӑшт кӑна, пӗр-икӗ утӑм
Хулана кӗме юлсан.

Мӗн кӑна-ши эпӗ куртӑм:
Вилнисем унта, пичче,
Турӗҫ утӑм хыҫҫӑн утӑм—
Йӑкӑлт-якӑлт, ӳкиччен.
Мӑкӑрланнӑ тӗтӗм витӗр
Вӑркӑнса пырать салтак,
Вилӗмӗ ҫитсен те, пурпӗр
Малалла утать пӑртак.

Ӳкрӗм эпӗ. Пуҫӑм юнлӑ.
Кӑкӑра вӗри тӑхлан
Ҫӗмӗрнӗ, анчах хӑюллӑн
Ҫӗр ҫинчен тӑма тӑрсан,
Сивӗ кӗр килсе пӗркенӗн,
Каранчӗ мӗнпур енчен
Еррипен хуралнӑҫемӗн
Хуралса умри тӗнче.

Куҫӑма хупса асилтӗм
Ялӑма та уйхире.
Килчӗ... Килчӗ савнӑ килӗм...
Килӗм-ҫуртӑм инҫетре...
Вилтӗм эп ҫемҫе тӑпраллӑ
Юнлӑ курӑк ҫийӗнче,
Тӗтӗмлӗ, сайра йӑмраллӑ
Пӗчӗк Ельня хулинче.

Шăхăрмасть халь хĕрнĕ хурçă
Тĕмеске тăпра çинче.
Кĕрлесе ăсанчĕ вăрçă,—
Йўçĕ тĕтĕм ăшĕнче
Манăн тусăмсем çўреççĕ,
Савăнăçлăн шавласа,
Эп курман шыва ĕçеççĕ,
Каскисем тулли ăсса.

Хăямат тăпра кичем мĕн,
Тăвăр çамрăк чунăма,
Ăшăтмасть мана, пиччемĕм,
Суранланнă çурăма
Витеймест çири шинелĕм,
Пульăсем шăтарнăскер.
Чĕрĕ чух, çулла хĕвелĕн
Çуттисем аванччĕ-çке!

Астăватăн-и, пиччемĕм,
Улăха выртма кайсан,
Пĕрлĕхен çырлипе чейĕ
Ĕçтереттĕн те кайран,
Хĕрхенсе мана, пĕркеттĕн
Кĕрĕкпе е чаппанпа,
Чунăма та илĕртеттĕн
Кăмăллă юмахупа.

Хурама пек пĕвĕм-сийĕм
Илеме кĕрсе çитсен,
Çăварни пĕкки пек хўхĕм

Аванчăк куçхаршисем
Палăрсан, кĕтсе чиперрĕн
Пултăм эпĕ яш салтак,
Юратма та ĕлкĕрмерĕм
Хĕрсене ялта пăртак.

Çамрăк эпĕ, çамрăк питĕ,
Хытарман-ха шăмшакка,
Мăйăхсăр-сухалсăр питĕм
Панулми пек яп-яка.
Илĕртмерĕм пĕр хĕре те,
Пĕр хĕре те чуптуман.
Халĕ ĕнтĕ эп çĕрєтĕп,—
Ӳт те, юн та юлмĕ ман.

Шавласа çурхи юр шывĕ
Шăнкăр-шăнкăр хускалсан,
Сарлака тăван çĕршывăн
Хирĕсем кăвакарсан,
Илĕртрĕ тĕнчен чĕр чапĕ,
Ансăр тупăк ăшĕнчен
Тухрăм та ăсантăм эпĕ
Пĕчĕк Ельня хулинчен.

Симĕс Днепр шывĕ урлă
Тухрăм Киев леш енне,
Арăш-пирĕш пысăк çулăм
Сыраннă хуласене,
Ялсене кĕрсе, кăварăн
Ашĕнче те кĕл çинче

Танккаса сана шырарӑм.
Тупӑнмарӑн эс, пичче!

Нимӗҫсен окопӗ урлӑ,
Йӗплешке пралук ҫинче
Ҫӳресен те эпӗ урӑх
Хӑрамастӑп пульсенчен,
Халӗ ҫук тумлам та юнӑм,
Ӳтӗм-тирӗм пӗтнӗ ҫке,
Вилӗмсӗр мӗлкемӗм юлнӑ,
Салтакла шинеллӗскер.

Ҫӑкӑрла-тӑварлӑ тутӑ,
Уйӑхлӑ, хӗвеллӗ, ҫутӑ,
Аслӑ, пысӑк тӗнчере
Пурӑнма ман пурччӗ шутӑм,
Хурчӑка пек чӗремре
Ӗмӗт пурччӗ,—татрӗ нимӗҫ
Ҫамрӑклах кунҫулӑма,
Ҫавӑнпа та эсӗ тивӗҫ
Тӑшмана шӑллушӑн хирӗҫ
Хар-хаяррӑн тавӑрма.

Кӑкӑрта чул евӗр ҫиллӗм
Канӑҫсӑр выртать ялан,
Нимӗҫсен хура виллиллӗ
Сарлака уя курсан,
Кӑмӑлӑм тулать. Мухтатӑп
Хамӑр ҫар хаярлӑхне,

Савӑнса вара пӑхатӑп
Хурӑн хӗрессем ҫине.

Салтакла шинеллӗ, харсӑр
Хам мӗлкемӗм виличчен
Ҫиллӗме пӗр пусармасӑр,
Вӗччӗме пӗрре манмасӑр,
Эпӗ ҫӳрӗп-ха, пичче,
Каллӗ-маллӗ, урлӑ-пирлӗ
Берлинри урамсене
Ҫаврӑнса, сар шӑмӑ питлӗ
Курӑнӑп нимӗҫсене.

Халь ҫулла пичче, ҫанталӑк
Питӗ ӑшӑ та хитре.
Пӗр сехет кӑна курмалӑх
Аякри тӑван хире
Кайӑк пек ҫитесчӗ иккӗн,
Яр уҫасчӗ ирхине
Хамӑра ӳстернӗ килӗн
Килӗшӳллӗ алӑкне.

Ҫук, чӗре ҫунать пулин те,
Савӑнҫлӑ килӗме
Таврӑнса кураймӑп ӗнтӗ
Тунсӑхланӑ аннеме,—
Мансӑрах уй-хир хумханӗ,
Шӑнкӑртатӗ шыв юхса,
Мансӑрах Силпи вӑрманӗ
Ларӗ вӗҫсӗр шавласа.

Халĕ пĕлĕт юхнă майăн
Шурă уйăх кăшт кăна
Пытансан, пичче, пит лайăх
Кайăпăр атакăна.
Нимĕçе татах, татах та
Хамăн кăмăл туличчен
Тустарма мана граната
Нумайрах парсам, пичче!

Нимĕçе танкпа таптар та
Тикĕслер çĕрпе пĕр тан!..
Тет шăллăм,—анчах сасартăк
Пыл пек тутлă ăйхăран
Вăранса кайса итлерĕм:
Çапăçу пулать иккен,
Çĕр чĕтрет-мĕн артиллери
Ӳхĕрсе кĕрленĕрен.

Асамат кĕперĕ евĕр
Карăнса, ракетăсем
Пĕлĕте татти-сыпписĕр
Шăтарса вĕлтĕртетсен,
Нимĕçсен енче йăмраллă
Курăнса ларать пĕр ял.
Пирĕн çамрăк генералăн
Рацире сасси пит паллă:
— Малалла!—тет генерал.

1944.

* * *

Çырă куçăм, ылттăнăмçăм, чунăм,
Чун хытсан та вăрçă тертĕнче,
Юлтăн эсĕ юратса хăм хунă
Канăçсăр чĕремĕн тĕпĕнче.

Хĕллехи çемçе юр кĕрчĕ урлă
Талпăнса атакăна кайсан,
Умăмра çыран та тарăн шурлăх,
Хыçăмра пас тытнă шур вăрман.

Çурçĕр тĕлĕнче урса пуçланнă
Çапăçу кĕрлерĕ вĕçĕмсĕр.
Чунăмçăм, чечекĕмçĕм, тăванăм,
Асăмран тухмарăн çавă çĕр!

Ĕнтĕркенĕ çамрăк ӳтĕм пит те
Йывăрланчĕ, сăрхăнчĕ суран.
Аташса чĕлхемĕмçĕм тĕвви те
Сӳтĕлчĕ, çухалчĕ ăнăм ман.

Хăтăлса юлап-и е вилеп-и,—
Тарласа хуллен аташнă чух,
Сан ятна пĕр май астунă эпĕ,
Çырă куçăм, хам çунат пек чун!

Эп сана вут ăшĕнче вăрахăн
Юратса ĕненнине кура,
Инкексем курсан та, çӳçĕм манăн
Ĕлĕкхин пекех йĕпхĕн хура.

Кĕрлесе тăхлан шăв-шавĕ иртĕ,
Килĕп хам кĕттернĕ килĕме,
Хир-хир тăрăх, улăх урлă иртĕп
Йăпатса çап-çамрăк чĕреме.

Сăмахха манса, чĕрӳ кăварĕ
Теприне хĕртни çинчен пĕлсен,
Хурланса сасартăк кăвакарĕç
Хул-хура та çӳçĕм пĕрчисем.

1943

* * *

Вăрçă кăварĕ витĕр вăркăнатăп,
Мана шыранă пек шилет тăхлан,
Анчах та эсĕ пĕр сехет кăна та
Тухмастăн, савнă тусăм, асăмран.

Сана курма паян çул çук, тăванăм,
Ман çулăм вут та çулăм ăшĕнче,
Ăна снаряд та бомба чавалана,
Юлташăмсен чĕр юнĕ ун çинче.

Вăрçă уйхирĕнче ем-ешĕл курăк
Шăтса ÿссессĕн, эпĕ таврăнăп,
Ирхи хĕвел хĕлхемĕ витĕр курăп
Çăра çаранлă хамăн таврана.

Пĕр утăм та тăрса юлмасăр вилĕм
Çÿрет, пăхать вăл ман çине.
Тен килĕ вăл, вара мана хам килĕм
Кĕтсе усаймĕ сăрлă хапхине.

Анчах çĕре кĕрсен, ман ятăм юлĕ
Кăвар чĕлхеллĕ халăх асĕнче,
Мана аса илен юмах та пулĕ,
Чăваш юрри шăранĕ ман çинчен.

Сăпка юррисенче ман юлĕ ятăм,
Вăл йыхăрĕ хăюллăн çапăçма,
Мĕншĕн тесен çĕршывшăн эпĕ
патăм
Вĕри вăя, хăватлă юнăма.

1943.

1

Симĕс пĕлĕте витсе, хаярран
Кĕрлесе хура самолётсем
Бомба тăкнă чух, тăпра мăнтарăн
Ĕсĕкленĕ евĕр чĕтренсен,

2

Кăвакарнă Белгород вăрманĕ
Минăпа снарядăн вутĕнче
Макăрса шавланă чух, суранĕ
Ыратсан çурхи чечен тĕнчен,

3

Нӳрлĕ шурлăхран тухса хуркайăк
Пирĕн окопсем çинчен иртсен,
Пĕр самант сасартăк çутçанталăк
Лăплансан, таса çилсем вĕрсен,

4

Вилĕме манса, куккук чиперрĕн
Авăтса килленнине илтсен,

Йăпанса, каçса кайса итлерĕм,
Хĕпĕртерĕм чунăм-чĕремрен,

5

Пурăнма юратнă харсăр кайăк,
Тĕтĕмрен, юнтан та кăвартан
Хăрамасăр, кĕвĕленĕ майăн
Савăнса юрлассăм килчĕ ман.

1943.

## ÇУМĂР

Çĕре çурас пек артиллери
Кăвар сурса шавланă чух,
Сасартăк аслати кĕрлерĕ,
Пин-пин снаряд пек аçа чуль
Тӳпе çинче сиксе çӳрерĕ.

Аçа çапса шартлатнă майăн
Озон шăршиллĕ хир çине
Окопăмран пăхса, эп лайăх
Асилтĕм Тютчев сăввине:
„Люблю грозу в начале мая...“

Лĕп ăшă çумăра ырларăм,
Хывса пăрахрăм каскăма,
Çара пуç тăтăм та сăнарăм:
Епле пуçларĕ çăвăнма
Аманнă çĕр, аннем мăнтарăн.

Чир кайтăр! Вилнĕ нимĕç мурĕ
Шăрши юлми çухалтăр çĕр çинчен!
Çĕртĕр тăшман вилли, çĕр чирĕ!
Çу, çумăр, чашкăр! Вăрçă хирĕ
Тасалтăр, уçăлтăр тĕнче!

1943.

* * *

Карта-карта кикак-кикак хуркайăк
Кĕлленнĕ Белгород çинче, çӳлте,
Иĕре-йĕре çулне шыранă майăн
Пăхатăп тĕтĕм витнĕ пĕлĕте.

Çунса ĕнес пек манăн чĕрене
Чĕнетĕн, катари чăваш çĕршывĕ.
Кунти çырма чӳхерĕ пĕвĕме,
Хăнасене чӳхетĕр Атăл шывĕ!

Тухатăп эпĕ нӳрлĕ окопран,
Хуркайăксем, сире пăхса калатăп,
Тупа тăватăп пĕтĕм кăмăлран:

Кăвакăн-симĕсĕн хумханĕ Атăл,
Кĕрлĕ куккуклă, шăпчăклă вăрман,—
Унта çӳреймĕ хапсăнса тăшман.

1913.

* * *

Карта-карта кикак-кикак хуркайӑк,
Таса та ирӗк ҫулӑр пӗлӗтре,
Тархасшӑн ҫитӗр ман тӑван хире,
Аннем илтмелӗх юрласа ҫеҫ кайӑр.

Ванса исленнӗ Белгород ҫпнчен
Эсир пӑртакҫӑ каласа хӑварӑр,
Салтак вӑрҫӑ кӑварӗ ӑшӗнче
Пыни ҫинчен, хуркайӑксем, хыпарлӑр.

Ачу маттур, ачу хитре шинеллӗ,—
Ҫапла пӗлтерӗр манӑн аннене, —
Килти пек, тейӗр, хӳхӗм кӳлепеллӗ.

Пӑхатӑп ҫунакан хула ҫине,
Сире, хуркайӑксем, пуҫа ачашшӑн
Тайса юлатӑп эп, Силпи чӑвашӗ.
1943.

* * *

Чĕре хытсассăн та, кикак хуркайăк,
Йĕрес килет, сире пăхса илсен.
Карталанса эсир иртеттĕрччĕ нумайăн
Танксем ҫинчен, ҫынсем ҫинчен ҫӳлтен...

Анчах пиртен пытаннă „Мессершмитт"
Сасартăк пĕлĕт ăшĕнчен тискеррĕн
Тухса сире тĕллерĕ те кĕрлерĕ,—
Хуркайăксем, сире шеллерĕм пит!

Аманнă тусăрсем тĕккисене
Тăка-тăка хура чулсем ҫине
Йăваннине курса, чунран ылхантăм.

Ылханнă тăшмана ҫĕр питĕнчен
Шăлса, ҫиллеслĕ кĕрлĕ автоматăм
Паян, ыран та—вăрҫă иртиччен.

1943.

* * *

Асап сахал-и пирĕн çул çинче:
Кĕрхи йĕпе-сапа, кăрлач сивви те.
Çӳретĕп эпĕ вăрçă хиренче
Тăхланла çумăр витĕр, вилĕм витĕр.

Çап-çамрăк чăрсăр хамăн пурнăçа
Вута чиксе хĕç пек шăратăп харсăр;
Кунта татти-сыпписĕр вăрçă-харçă
Кĕрлет, кăвар чĕлхеллĕн калаçса.

Çӳретĕп эп окоплă та мăянлă
Курск хиренче,—кĕрлет йĕри-тавра
Хаваслă шăпчăксен юрри янравлă.

Тар шăршинче те тĕтĕмре, шавра
Çӳренĕ майăн кĕнеке çыратăп,
Ăна хам ată кунчинче усратăп.

1943.

## Ç Ы Р У

Савнă тусăм, кăмăллă юлташăм,
Ан кўрен тархасшăн, ан çилен:
Перома алла тахçан тытасшăн
Çунтăм эпĕ тĕксĕм каçсерен.

Кăвакарчăн пек кăвак яка пăр
Мина ўксе çурăлнă чухне
Асăмран тухмарăн, эсĕ капăр
Тумланса çĕклентĕн куç умне.

Тĕттĕм каç тăман чаршавĕ витĕр
Утнă чух сан ăшă куçусем
Курăнса çунсан, кăрлач сивви те
Сўрĕлчĕ те пăрăнчĕç çилсем.

Чĕркуççи таран юр тăрăх эпĕ
Утрăм пĕр сукмаксăр та йĕрсĕр.
Умăмра, хура сăрлă тĕкме пек,
Хăрăм пек, хураччĕ çиллĕ çĕр.

Хушăран ракетăсен кĕперĕ
Ярăнса çухалчĕ пĕлĕтре.

Пулемёт сасси пĕр май кĕрлерĕ,
Мина иртрĕ, шăхăрчĕ етре.

Утрăм эпĕ, пытăм тĕксĕм витĕр·
Тар тăварлă. Тумăм йĕп-йĕпе.
Кусăмсем умра татти-сыпписĕр
Йăлтăртатрĕç çул кăтартнă пек.

Пĕлĕте çурса çурла пек уйăх
Тухасса мĕнле кĕтсессĕн те,
Çуталса выртмарĕ Донăн уйĕ,
Сирĕлмерĕ хулăм пĕлĕт те.
Çакă çĕр санпаччĕ манăн туйăм,
Пытăн эсĕ манăн чĕрере,
Пултăн сарăран та сарă уйăх,
Пăхрăн чĕререн те чĕрĕрех.

Сан патна çитеймĕп эп приказсăр.
Хушшăмăр—пин çухрăм шурă юр,
Шупашкар инçе, инçе тăван сăрт
Умăмра окоп та хĕрлĕ юн.

Пирĕн кĕтнĕ çĕнтерӳ кĕперĕ
Халăх юнĕпе эрешленсен,
Килĕме килсе, санпа чиперрĕн
Калаçса йăпанăп чĕререн.

Савнă тусăм, кăмăллă юлташăм,
Эпĕ пырăп,—хытă ĕненсем!
Савăнса ун чух ачаш-ачашшăн
Йăлтăртатĕç сыра куçусем.

1943.

* * *

Ирхине вăраннă шăпчăк
Юррине тăссан,
Ян-янах кайса хускалчĕ
Тĕлĕрнĕ вăрман.

Йăпăрт-йăпăрт шух хӳреллĕ
Пулăсем сиксен,
Хуçалатчĕç сар хĕвелĕн
Ылттăн урисем.

Ыраннă утсем ĕçетчĕç
Пĕлĕтлĕ шыва.
Сивĕ сывлăмне силлетчĕ
Чĕтренсе хăва.

Ывăçăм курка пек пултăр
Тăрă шыв ĕçме,—
Куçкĕски çинчи пек куртăм
Хамăн мĕлкĕме.

Шурă пĕрчĕсем пăртакçă
Лекнĕ çӳçĕме,

Пӗркеленӗ вăрçă-харçă
Çамрăк питӗме.

Мӗлкӗме курсан, палларӗ,
Хытă кармашса,
Кӗçенсе пуçне сулларӗ
Тусăм, тур лаша.

Уруна тапса, лашаçăм,
Çилхӳне силле,
Малалла вут урлă каçăп
Санпала пӗрле.

Çамрăкланăп, манăн çӳçӗм
Пулӗ хуп-хура,
Йăлтăр-йăлтăр вылӗ çиçӗм
Чакăр куçăмра.

1942.

* * *

Сап-сарă çулçăсем вĕçсе
Йĕпеннĕ çул çине ўкеççĕ.
Юратнă тусăмçăм инçе,—
Утатăп эпĕ пĕр-пĕчченçĕ.

Тăван çĕршывăмçăм инçе,
Инçе тĕке çыранлă Атăл.
Çўçенчĕк Висла леш енче
Тăван хирсем енне пăхатăп.

Автан киккирикки́йĕ пек
Пилеш тĕмми хĕрелнĕ хыççăн
Çўреттĕмĕр хир тăрăх тек,
Юратнă тусăм, çырă куçăм!

Лăпланнă Атăла çăра,
Тăхлан пек, пĕлĕт ўкнĕ майăн
Хĕвеллĕ ăшă кăнтăра
Иртетчĕ мăнтăркка хуркайăк.

Санран инçе, инçе паян,
Анчах ялан аса илетĕп

Сар хăмăллă тăван уя,
Тăван яла, тăван киле те.

Куçа пăртак кăна хупсан,
Çумра пекех, чĕре пек çывăх,
Хĕвел çутти пек, катаран
Ума килет тăван çĕршывăм.

Инçе, инçе те инçетре
Мана кĕтсе шавлать телейлĕ,
Сар ылттăн çулçăллă, хитре,
Тĕтреллĕ Шупашкар аллейĕ.

1944.

# ШАНЧӐК

*Шанчӑк пуррисем — телейлӗ.*

***Çеçпӗл Мишши.***

I

Кӗтмел çырлийӗ вучахри кӑварран
Пӑхать ем-ешӗл курӑк хушшинчен.
Хӗлле куçа уçми тӑман хаярран
Уланӑ чух, çырла хӗрелличчен
Çӗре кӗмесӗр, сывӑ пуранма
Ӗмӗтленсе, вӗри чӗрем йӑпанчӗ,
Пӗр вӑхӑт та сӳнми хӑватлӑ шанчӑк
Мана вӑй пачӗ харсӑр çапӑçма.

II

Кӗр çитӗ те сар майӗр шӗкӗлченӗ,
Пилеш хӗрелӗ, хӑмӑрланӗ хир.
Умра çаплах йӳç тӗтӗм тӗтреленӗ;
Тутти-сыпписӗр вӑрçӑ каç та ир
Урса кисренӗ аслӑ уйсенче;

Кёллене ял, çунса йăване хурăн;
Кивелне çётёк шинелсем çинче
Шăтса хумхане çамрăк курăк.

III

Çулла тулса шавлана çутçанталăк
Ыйха кайсассăн, ăшă çёршыва
Канма ăсанё картипе хуркайăк;
Шăнтса кантаре сивё пăр шыва;
Вăрман тёллене, итемсем çине
Канма илене ушкăн кăвакарчăн;
Анчах салтак хăюллă чёрине
Канма памасăр кёрле вăрçă-харçă.

IV

Салтак килессине кётсе хёрарăм
Пичке тулли йўçтерне пыл-сăра;
Нўхрепёнче ун турăхё; хăяре
Выртать вăрăм йăранлă пахчара;
Пулас ача-пăча валли сăпкалăх
Виç çул кашлать çап-çамрăк хурама;
Усет хăмла, анчах та вăрçă аслă,
Салтакăн çулё вăрăм-ха утма.

V

Нумай пулмасть, кунта анчах кăна
Атака иртре, аслă хир шăпланчё.
Пăхатăп эпё уçă таврана,
Чёре тулли сикет хавасла шанчăк.

Йĕри-тавра тăшман вĕри металĕ
Урса кĕрленĕ хыççăн ывăнсан,
Çерем çинче канса выртаççĕ халĕ
Хăравсăр танкистсем—туссемĕм ман.

VI

Паян вилмен, ыран та çитмĕ вилĕм,—
Телейлĕн уçăп хамăн алăка,
Мана кĕтсе кĕрекеленĕ килĕм;
Тулли сар уйăх евĕр сарлака,
Сап-сарă, тарăн алтăрсем çине
Юхса сăра хăватлăн кăпăкланĕ;
Кĕсле тумашкăн хўхĕм вĕрене
Ўстерĕ йăлăмри чăваш вăрманĕ.

1943.

# УКРАИНĂРИ ПĔРРЕМĔШ ФРОНТРА ÇАПĂÇАКАН

## ЧĂВАШСЕН ЮРРИ

Воронеж та Харьков, чиеллĕ Полтава,
Житомир та Киев, Тарнополь, Карпат.
Пĕрремĕш фронтчапĕ, хисеплĕ мухтавĕ
Тусанлă çул тăрăх, вут витĕр янрать.

Юратнă Çĕршывăн
Хăвачĕ пире
Ӳстерчĕ те сывă,
Ӳстерчĕ хитре,—
Нумай та чĕлхеллĕ
Туссем хушшинче
Утатпăр телейлĕ
Совет Çарĕнче.

Чăп-чăмăр сар уйăх, хĕвел те сап-сарă,
Хумханчăк ват Днепр, кĕрлевлĕ вăрман.
Унта та, кунта та тăшманăн масарĕ,
Унта та, кунта та арканнă тăшман.

3. Ухсай. Салтак кĕнеки.

Аппамăр Украйна,
Сана тертсенчен
Çăласшăн нумайăн
Чăваш çĕрĕнчен
Килетпĕр тăванăн,
Килетпĕр савса,—
Чунпа эпир санăн,
Чĕремĕр таса.

Йĕпе-и, тусан-и, юрсем-и пит тарăн,—
Пĕри те чарман та, чараймĕ пире.
Хастаррăн пыратпăр, çĕнетпĕр хаяррăн
Кăвар пек присяга вĕрет чĕрере.

Эпир-и йăваш-и,—
Ĕçре те ĕçчен,
Çиленнĕ чăвашăн
Вăрçă хирĕнче
Хăпарĕ те кайĕ
Чыс-чапĕ çӳле,—
Ахаль-и Чапаев
Çуралнă пирте!

Сахал-и тус вилнĕ, юн юхнă сахал-и,—
Тăшманăн Берлинĕ ăна пĕлмелле!
Пехота тустарĕ, çĕрне танк сухалĕ,
«Катюша» ташлатĕ ӳпне-питнелле.
Воронеж, Полтава,
Тарнополь, Карпат...

Пĕрремĕш мухтавлă
Фронт чапĕ янрать.
Инçе-и шуйттанĕ,
Мур илĕш Берлин?
Çитетпĕр те, канĕ
Салтак чунĕ тин.

1944.

---

## Ч А П

Тĕнче шăпланчĕ, иртрĕ юн шăрши,
Тăхлан та, тар та халĕ сивĕ.
Мухтав сана, çĕршывăмçăм, çĕршыв,
Хăюлăхпа телей çĕршывĕ!

Такан кĕлеллĕ аттăн тусанне
Чÿхерĕ Эльба, çурĕ Висла.
Дунай çинче те хамăр сăнсене
Курса тăрса эпир шыв ĕснĕ.

Шинеллĕ ачусем ăçта кăна
Пулмарĕç-ши, тăван çĕршывăм?
Курман-и хĕрлĕ çăлтăрлă çынна
Сар чул çыранлă Одер шывĕ?

Шывне ĕçетпĕр каскăпа ăсса,
Ура усса пăхса ларатпăр;
Çеçен-хирти пек çивчĕ шăхăрса,
Лашасене те шăваратпăр.

Сĕвем çÿçне çамки çине хурсах
Пире юнарĕ вĕçкĕн Гитлер,

Анчах хĕçпе хăмсарнă вăр-хурах
Юлать-и мăшкăллă вилмесĕр...

Ансат, сасартăк ултă эрнере,
Пуçа йăтма та май памасăр,
Çапса салатăп тенĕччĕ пире
Каппайчăк та панккав ефрейтор.

Уяр июнĕн кăн-кăвак ирне
Вăратнă кĕрлеве кам манĕ?—
Тăри юррилле ешĕл хирсене
Çăтас пек тапăнчĕ Германи.

Чĕтрерĕ çĕр те сывлăш çавă кун,
Хăпарчĕ вут та, сикрĕ çулăм;
Шыва та юн, çĕре те юхрĕ юн,
Тумларĕ халăхăн куççулĕ.

Тăшман аваймĕ пирĕн çурăма,
Арканĕ хăй, çунса кĕлленĕ,—
Пире хастарлă ирĕк пурăнма
Телей çулне кăтартнă Ленин.

Тăван çĕршывшăн çулăмлă хире
Чĕнчĕ пире çулпуçĕ Сталин.
Вăл пачĕ шанчăк, пачĕ вăл пире
Пĕтми хăват та чăн ăсталăх.

Вăрçă кăварĕ витĕр çĕр çине
Хăватлă çĕнтерӳ илемĕ
Кĕпер пек карăнса килессине
Пире кăтартрĕ вăл—аттемĕр.

Улерĕ иртĕнсе вĕри тăхлан,
Татти-сыпписĕр çурĕ хурçă,
Масарĕсем вăрман пек пулнăран
Сайралчĕ нимĕç, нимĕç урчĕ.

Пире таптасшăн ÿхĕрчĕç куллен
Танксем çĕршер-пиншер те мар-и,
Анчах та пирĕн пысăк чĕререн
Вăйли пĕрре те тупăнмарĕ.

Пире пăхать те тĕлĕнет тĕнче:
Нихçан вилми чипер ача пек,
Хаяр та аслă вăрçă вутĕнче
Çуралчĕ пирĕн халăх чапĕ.

Ăçта хайхи пиншер усал танксем?
Ăçта бронне-тирне ÿкерчĕç?
Хурçи çатма валли аван вĕсен,—
Сиксе пиçет унта икерчĕ.

Ăçта çÿрет хайхи карма çăвар,
Мунча ийӳи пекех ефрейтор?
Майне пăяв кĕтет, кĕтет çăва,—
Пуçне хĕвел çине кăлартăр!

Мускавăн урамне кĕресшĕнччĕ,
Анчах та тухрĕ тепĕр майăн:
Эпир çÿретпĕр Одер хĕрринче
Тĕрлĕ чĕлхеллĕ те нумайăн.

Çыранĕ çÿлĕ, шывĕ тап-таса,
Салтак таптанă çулĕ такăр.

Лашасене килти пек шăхăрса
Юрланă майăн шăваратпăр.

Унта тăван чĕлхемĕн сассине
Хутран-ситрен илтетĕп эпĕ:
Совет çĕршывĕн аслă мухтавне
Кĕрсе кĕрлет чăвашăн чапĕ.

1945.

## КАЧЧĂ

Чăн-чăн каччă эпĕ куртăм
Висла леш енче:
Йăлтăр-йăлтăр çичĕ орден
Кăкарĕ çинче.

Куçхарши йĕпхĕн хура та
Çăп-çăраччĕ ун,
Питĕнче тапса тăратчĕ
Нар пек хĕрлĕ юн.

Уринчи çемçе хром атă
Тикĕс утнă чух,
Тĕпренсе тăрса юлатчĕ
Шăкăр-макăр чул.

Çул çинче паллашнă хыççăн
Чи малтан табак
Çавăрса, унпа пуплерĕм
Кăмăллăн пăртак.

Хамăр ен çыннин сăнарĕ
Сисĕнчĕ унта:

—Ăçтисем пулатăн,—терĕм,—
Старшина юлташ?

—Чăвашран. Тăвай районĕ,—
Терĕ старшина.
Пилĕк çул хушши курман вăл
Хамăр таврана.

Таврăнĕ,—юратнă ялĕн
Урамне кĕрсен,
Ӳхĕрĕç чипер Тăвайăн
Ватă йăмрисем.

Берлина çĕнтерне паттăр
Тăн-тăн утнă май
Авăнса кайса силленĕ
Сарлака урай.

Пилĕк çул хушши усранă
Салатран сăра
Юхтарса, ăна хăналĕç
Кӳршĕ-аршăра.

—Берлина çапса салатнă
Йĕркепе пиртен
Тыт-ха, тыт автан йĕтесĕ!—
Тейĕç килсерен.

Ялĕнче пайтах-çке пулĕç,
Старшина килсен,
Чĕрипе те, чунĕпе те
Çунакан хĕрсем.

Теветкел качча тĕлпултăм
Висла леш енче:
Çичĕ йăлтăр-йăлтăр орден
Кăкăрĕ çинче.

1945

# ПРАГА

Аттем те вата кукаçейĕм
Курман урамсемпе куллен
Çӳретĕп те, туртать телейĕм
Тăван çĕршывăм еннелле.

Çулçисене касса, тирпейлĕ
Якатнă каштансем çине
Сапать каçхи Карпат хĕвелĕ
Йăмăх тымарлă çуттине.

Канма-тăма пĕртте пĕлмесĕр
Утатăп,—аттăм шак та шак.
Вĕр-çĕнĕ улача пир евĕр
Тӳпе сип-симĕс, кăн-кăвак.

Асфальт кунта яка та такăр,
Чăваш çынни каларĕшле:
Алла чутлана йĕтĕр парăр,
Салма унатăп темелле!

Шывпа çуса иртсе каюçăн
Урам сĕтел пек тап-таса;

Бензин шăршисĕр сывлăш уçă
Тăрать, садри пек туйăнса.

Паян çап-çамрăк эсĕ, Прага,
Паян илемлĕ те хитре!
Эпир кунтан каятпăр акă,
Анчах та манăн-и пире?..

Кунта—тискер хура çăханăн,
Какай кўпсе, эрех ĕçсе,
Пўрленнĕ евĕр шăршă янă,
Çăпан пек, ирсĕр нимĕçсем.

Вĕсен хупахĕ, ресторанĕ
Кунта шавланă кунсерен.
Ăçта кайсан та, чыхаканĕ
Шуйттан фашист Германирен.

Куççуль пек çăлтăрсен мерченĕ
Шыва пин ванчăк тăкăнса
Чĕтренĕ майăн ĕçĕкленĕ
Хĕрсем, хăва пек авăнса.

Хутран-ситрен паян та халĕ
Йăмраллă Влтавă хĕрринче
Яш çивĕт тунисем сахал-и
Тухаççĕ юшкăн ăшĕнчен!

Садусенче ўсет çеçке-и, —
Устернĕ нимĕç вĕлтĕрен..
Анчах килет тĕнче телейĕ
Кăвар та çулăм витĕрех.

Эпир çитертĕмĕр ак çакă
Ĕнсе çинче ăна йăтса.
Çавна кура та эсĕ, Прага,
Паян илемлĕ те таса.

Вĕри юна тумлам-тумламăн
Тăкса тасатрăмăр çĕре.
Çавна кура хăрушă тамăк
Çухалчĕ, Прага, сан çирен.

Хĕвел те курчĕ, курчĕ уйăх
Эпир кунта васканине.
Çĕршер çултан та Прага туйĕ
Пирĕн чĕремĕр ăшшине!

1945.

## ЧĂВАШ ЧĔЛХИ

Тĕтреллĕ Висла леш енче çӳреп-и,
Кĕретĕп-и Карпат ту-чакăлне,
Ăçта кайсассăн та, илтетĕп эпĕ
Тăван чĕлхемĕн çепĕç сассине.

Туссем калаçнă чух, тăван чĕлхемĕм,
Шур акăш тĕкĕ евĕр эс çемçе;
Санпа ман халăх чунĕ те илемĕ
Çӳрет çӳлте те çĕр çинче вĕçсе.

Юрланă чух, сассу хитре те уçă;
Итлет вăрман та, хир те янраса.
Чулсем çинче канми-тăми çăлкуçĕ
Юхса йăпаннă пек сассу таса.

Екки ярса ачашшăн калаçмалăх,
Çулла çап-çутă уйăх шевлинчен
Туса, сана шăратнă манăн халăх,
Сана шăварнă шăпчăк юрринче.

Анчах та халăхăн çилли хаяррăн
Чĕре тулли йӳçсе тапса тухсан,

Чӑваш чӗлхи, чӗлхемӗм, шӗл-кӑваррӑн
Ҫунать вӑю та сан, юрру та сан!

Сана хӑрушӑ кунсенче касмалӑх,
Йыхравлӑн кӗрлеме кӗрешӳре
Хӗвелӗн ҫуттипе туптанӑ халӑх,
Сана савса шӑратнӑ ҫиҫӗмре.

Сана йӑваш теме кам хӑюллանӗ,
Сана кам хурлӗ халӗ ҫӗр ҫинче,—
Итлерӗм эпӗ, гварди капитанӗ,
Сана вутри Воронеж хирӗнче.

Ҫулла—тусан, хӗлле—юр юнлӑ, тарӑн,
Ялсем те хуласем ҫинче хӗлхем.
Танкра та нӳрлӗ окопра тӑнларӑм
Тӗреклӗ сассуна, тӑван чӗлхем!

Орӗл та, Киев та, Варшава,
Белград та, Будапешт та, Порт-Артур...
Тагти-сыпписӗр пычӗ вӑрҫӑ шавӗ,—
Унта чӑваш чӗлхин те пайӗ пур.

Тӑван чӗлхемӗмҫӗм, тӑванлӑ эсӗ
Пуян та ҫирӗп вырӑс чӗлхипе,
Инкек те терт, асап та хур пӗлмесӗр
Ялтра та савӑн аслӑ пиччӳпе!

Тӑшман тесен—ҫилев, кӗрле кӗр те кӗр,
Туссем тесен—саркайӑкла ян-ян,

Хитре сассу та шухӑшу ӗрчетӗр;
Кӗрхи уйри итем пек пул пуян!

Сана паян тиркевлӗ хурлаканӗ
Ăҫта кам пулӗ пысӑк ҫӗр ҫинче,—
Мухтатӑп эпӗ, гварди капитанӗ,
Сана хӗвел те уйӑх умӗнче.

1945.

## ВИНТОВКА

Хисеплĕ тусăм, шанчăкла пăшалăм
    Ялтрать хĕвелĕн çуттинче.
Хитре те çутă затворне ман аллăм
    Тытать хăрушă кунсенче.

Манччен ăна тĕреклĕ тытаканĕ
    Хăравсăр паттăр гражданин
Финлянди хирĕнче патвар утман-и?
    Вăл утнă, пулнă харсăр çын.

Винтовка унăн аллинче тĕл пенĕ,
    Пĕрре те йăнăш шартлатман.
Винтовка паттăр хушнă пек кĕрленĕ;
    Йăваннă юн хăсса тăшман.

Пĕрре кăна-и çивĕч штыкĕ унăн
    Ялтранă? Пĕтнĕ çичĕ ют.
Тăшман пуçне тивлетсĕр, чыссăр хунă,
    Тăшман тăраймĕ тепĕр хут.

Винтовка сивĕ кунсенче юнланнă,
    Анчах нихçан та пăрланман,

Çиçсе çуталнă штык, затвор вылянă,
Шывран, юртан та тутăхман.

Совет çĕршывĕн паттăр гражданинĕ
Финлянди вăрçă хирĕнче
Хастарланса тăван çĕршывшăн вилнĕ,
Кĕрешнĕ куçĕ сӳниччен.

Герой ятне аса илетпĕр халĕ,
Вулатпăр çутă штык çинче,
Хасан панче чапланнă ун пăшалĕ,
Чапланнă Халхин-Гол панче.

Ăна тытса тупа тăватăп эпĕ,
Нихçан та тутăхмĕ пăшал,
Çухалмĕ ун мухтавĕпе хисепĕ,
Шалт перĕ те ӳкерĕ шалт.

Юратнă тусăм, шанчăклă пăшалăм,
Тивлетлĕ тусăм алăра,
Тăшмансене кăвар сапса ăшалĕ,
Çунтарĕ, хирĕ вăрçăра.

Эс пур чухне, пăшалăм—савнă тусăм,
Пĕр куç хупмасăр, каç та ир
Эп сыхлăп çĕршыва; хумханĕ пусă,
Вăрман каш-кашлĕ, шавлĕ хир.

Эп йăвансан, сана, пăшалăм, тытĕ
Татах та тепĕр тус герой.
Тăшман çаралĕ, вилĕ урнă йытă,
Çĕршыв ешерĕ, шавлĕ уй.

1941

## ВИСЛА

Хум хыççăн хум хума хуса
Хускалнă шыв пăртак тĕтреллĕ.
Тыла-пуççи çинчен тухса,
Вĕçет тĕвик-тĕвик текерлĕк.

Тарланă лашасем çинче
Туйри хĕр пек тухъяллă кайăк
Вĕçсе иртет; сасси çинçе,
Сасси тăван хирти пек лайăх.

Кумса хумхантăр хăяху!
Кĕрле те ўхĕр эсĕ, Висла!
Çыранусем паян çич хут
Сăваплă маншăн, маншăн чыслă.

Çилпе шавла! Çилпе лăскан!
Хăмăшусем хура чаканлă.
Салтак пек тўрĕ тăракан
Тирекўсем кунта чапланнă.

Çулла, вут вигĕр, тĕтĕмре,
Эпир хура вăрман пек йышлă,

Хăватлă килнĕ инçетрен,—
Ана манман-и эсĕ, Висла?

Пăшаллă, йывăр атăллă,
Çунат пекех сулмак хăлаçлă
Йышсе тĕке çыраналла,
Эпир кунта сан урлă каçнă.

Хăвасене те шăйăрнă,
Шыва та каснă хĕрнĕ хурçă.
Нумай салтак, нумай сатур çын
Пытаннă юшкăн хăйăрна.

Тăпра чĕтреннĕ вăхăтра—
Шинель аркийĕсем пек анлă,
Лаша çилхи пекех кăтра—
Сан хумусем пайтах юнланнă.

Шăратнă хурçă пек кĕрен
Шыву чĕрем юратнă саслăн
Сиксе чарусăр кĕрлесен,
Паян илемлĕ эсĕ, Висла!

Кăллех хăвallă хĕррӳне
Тухса йăлттам утса çӳретĕп;
Иртсе лăпланнă кунсене,
Юлташсене аса илетĕп.

Монах тумтирĕ пек хура,
Тĕтресĕр сулхăн Польша каçĕ
Хирсем çине килсен, шывра
Черченкĕ çăлтăрсем çунаççĕ.

Хисеплĕ вилнĕ тусăмсем,
Мана курса шыв витĕр харсăр
Тинкернĕ евĕр, çăлтăрсем
Пăхса выртаççĕ йăлтăр-ялтăр.

Хăна валли пылланакан
Пасманари хĕрӳ çĕпре пек
Чашлá паян, кĕрле паян,
Мана ăсат! Каятăп эпĕ.

Вăрманлă Атăлта ишсе
Утленнĕ хур тĕкки минтерлĕ
Çавра пукан çине типтерлĕ
Мана лартса, ман юлташсем
Хăна тума така ӳстернĕ.

Инçе кайсан та, сан çинчен
Пĕрре те манмăп эпĕ, Висла:
Çыранусем куç умĕнче
Сăваплă маншăн, маншăн чыслă.

Пăшаллă, йывăр атăллă,
Машинлă, тупăллă, понтонлă
Россия kaçнă малалла,
Берлиналла кунтан сан урлă.

1945.

## ҪĂМĂЛЛĂ ХЫПАР

Улăхри çăра йăмраллă,
Кăпăклă вĕри мунчаллă
Тунсăхланă ялăмран
Илтĕм пĕр кăвак конверт.
Кăмăллă хыпар, паян
Чĕрене вутпа тиверт!

Çывăх тусăмçăм, юлташăм,
Яланхи пекех ачашшăн
Ал çупса вуламалла
Çырса янă сăвăлла,
Пĕчĕк те мар, пысăк мар
Пĕр вăтам кăна хыпар.

Пирĕн ялта пур бухгалтер,
Тен эсир ăна пĕлетĕр:
Майăхлă этем, яштак,
Хушăран кăна пăртак
Сыпкалать Иван Михайлов,
Сыпсанах, юрлать Михайлов,

Çамрăк çын, анчах та ун
Килĕнче халь ултă чун:
Виçĕ хĕр те виçĕ ывăл,
Ултташ те патвар та сывă,
Панулми пек пичĕсем,
Çĕмĕртсем пек куçĕсем.

Улăхри çăра йăмралла
Ялăмри Иван Михайлов
Питĕрех те ăрăскалла,
Ывăл-хĕрĕпе пуян,
Шавласа туйран туя
Анатран вăл Тукаса
Çӳрĕ çĕлĕк çавăрса.

Ачисем ӳссе çитсен,
Генерал пек вăл чечен
Урла пирлĕ, каллĕ-маллĕ
Мăйăхне шăлса пăхкалĕ,
Мухтанса хăлхи çине
Чалăш лартĕ картусне.

Алăри кăвак конверт:
—Вăрçă вучĕ витĕр,—тет,—
Çапăçса çӳрет геройлăн
Старшина Иван Михайлов,
Кăкăрĕ çинче ун халь
Икĕ орден, пĕр медаль.

Алăри кăвак конверт:
—Амансан, вăл пĕлтĕр,—тет,—

Киленче канса чиперрен
Ăшă кăмăллă çӳрерĕ,
Сывалса çитсен, калле
Кайрĕ вăрçă хирнелле.

Алăри кăвак конверт:
—Халĕ ĕнтĕ пĕлĕр,—тет,—
Чăмăркка Варуç инке
Илсе юлнă виç икел,
Михалюк Мĕтри Иванĕн
Ашкăрса ӳсет вăрманĕ.

Ут çулма каяс чухне
Тухнă çутă тĕнчене
Виçĕ ывăл—виçĕ кайăк,
Виçĕ паттăр çын—Михайлов,
Виççĕш ашшĕ пек хура,
Виççĕш—виçĕ сăпкара.

Хытă савăнса иккен
Мухтанать Варуç инке:
—Чи асли,—тет,—харсăр пулĕ,
Сывлăшра вĕçсе йăл кулĕ,
Никама та парăнми
Танк çӳретĕ вăтамми.

Çăмăллăн тата ĕнерлĕн
Кĕçĕнни утне йĕнерлĕ,
Шыв пек тикĕс уйхирпе,
Ăшă çимĕк çилĕ пек,

Хăвăрт çӳрĕ, малалла
Вĕçĕ ăмăрткайăкла.

Пирĕн инкене пĕр хут та
Ан çилен, хастар пехота:
Сан валли те паттăрсем,
Пăшатан пек куçлисем
Пуласса эпир шанатпăр,
Чăн сăмах сана паратпăр.

Пысăк вăрçă иртсе кайĕ,
Тавранĕ килне Михайлов,
Виçĕ çĕнĕ паттăр ывăл,
Пĕрлĕхен пек питлĕ ывăл
Ярăнса унчух вара
Сикĕ виçĕ сăпкара.

Чăтăм ӳтлĕ, ăмăрлă,
Тӳсĕмлĕ те шăнăрлă,
Чăмăр питлĕ йĕкрешсем,
Пирĕн ял кĕрешĕсем,
Курĕç шыв та, курĕç вут та,
Пулĕç ашшĕ пек пехота.

Малашне пыра-киле
Чĕререн шанас килет:
Палăрĕ Михайлов йышĕ,
Чап çумне тата чап хушĕ,
Ун чипер ачисенчен
Генерал та тухĕ тен.

Алӑри кӑвак конверт:
—Ҫӳрет вӑрҫӑ витӗр,—тет,—
Михалюк Мӗтри Иванӗ,
Килӗнче юман вӑрманӗ
Кашласах ӳсет паян,
Ашкӑрать хура вӑрман.

Ма хура?—тесе ыйтсан,
Хай Михайлов, тӗп юман,
Йӗпкӗн хурине кура
Ачисем те хуп-хура;
Амӗш кӑтрине кура
Ачисем пурте кӑтра.

Алӑри кӑвак конверт:
—Пӳрчӗ халӗ тӑвӑр,—тет,—
Кирлӗ ӗнтӗ ҫӗнӗ ҫурт,
Пултӑр аслӑ та ҫап-ҫут,
Ҫавӑнпа та ял совечӗ
Вӑрмана бригада ячӗ.

Улӑхри ҫӑра йӑмраллӑ
Ялӑмри Иван Михайлов
Ачисемшӗн сӑрт ҫинче,
Ҫӑл валакӗ умӗнче
Лартнӑ ҫурт хитре те ҫӳлӗ,
Ҫуртӗнче тӑватӑ пӳлӗм.
Ку ҫурта ҫӗкленӗ чух
Йывӑҫ касрӗ, ватрӗ чул,
Кӑварти пекех ҫӳрерӗ,

Кăнтăрла та, каç та ир
Ывăнма, канма пĕлмерĕ
Ватă Кĕлпук бригадир.

Кăмăллă Кĕлпук пиччен
Ылттăн çăмăл аллинче
Янăрарĕ çивĕч пуртă,
Хăй чутланă чаплă çуртăн
Никĕс пĕрени çине
Вăл картларĕ хăй ятне.

Улăхри çăра йăмраллă,
Кăпăклă вĕри мунчаллă
Ялăмри вунпилĕк пуртă
Кĕрлесе çĕкленĕ çуртăн
Ял-ял урлă чапĕ кайĕ.

Çут хăмаллă хыр урайĕ
Питĕ селĕм мĕн утма,
Вăрçă хыççăн ташлама,
Çăмăл-çăмăл кайăкăн
Ярăнма вăл яп-яка.

1944.

## КĔРЕКЕ ЮРРИ

Ларăр-ха, туссем кĕрекене,
Ларăр халĕ тачă, юнашар.
Атьăр-ха юман сĕтел умне
Кар тăрса пĕр юрă шăратар.

Салтакла йăтар-ха тӳр тăрса.
Кĕреке сĕтелĕ сарлака.
Çĕклĕпĕр малтан чанклаттарса
Аслă Сталиншăн тĕппи курка!

Туссенчен чылайĕш халĕ çук
Пирĕн кĕрекемĕр хушшинче.
Çулăм витĕр пычĕ пирĕн çул,
Пычĕ пысăк вăрçă хирĕнче.

Салтакла йăтар-ха тӳр тăрса,
Кĕреке сĕтелĕ сарлака.
Çĕклĕпĕр тата чанклаттарса
Паттăр вилнисемшĕн тĕп курка!

Çапăçма тăван çĕршыв пире
Пачĕ харсăр пысăк вăй-хăват.
Çавăнпа çӳрет те тĕнчере
Пирĕн салтаксем çинчен ыр ят.

Салтакла йăтар-ха тӳр тăрса.
Кĕреке сĕтелĕ сарлака.
Çĕклĕпĕр тепре чанклаттарса
Хамăр халăхшăн тĕппи курка!

1945.

## АТӐЛ ÇИНЧЕН ХУНӐ ЮРӐ

Юррӑмӑр, хускал, ан татӑл,
Атӑл тӑрӑх кӗрлесем!
Хумханать юратнӑ Атӑл,
Хӳхӗм унӑн хӗррисем.

Пирӗн ӗмӗт халӗ аслӑ,
Ӗмӗт аслӑ сан пекех.
Пирӗн пурӑнӑç хаваслӑ
Пулӗ ӗмӗр-ӗмӗрех.

Шывупа пире чӳхерӗн
Сулхӑн каç та уçӑ ир,
Çавӑнпа кунта чиперрӗн
Паттӑр ӳсрӗмӗр эпир.

Витӗр куçлӑ пирӗн халӑх,—
Чунӗ те сан пек таса.
Мухтанса юрлатпӑр халӗ
Сан шыву пек шавласа.

Хапсăнса тăшман ăмсанчĕ,
Шыв сыпасшăнччĕ санран.
Вут-кăвар сапса хăпарчĕ
Хир-хир урлă аякран.

Пирĕн халăх кар çĕкленчĕ,—
Тĕлĕнтĕр эппин тĕнче!
Атăл учĕсем кĕçенчĕç
Одер шывĕ хĕрринче.

Юррăмăр, явра, ан татăл,
Атăл тăрăх кĕрлесем!
Пысăк эсĕ, савнă Атăл,
Чаплă санăн çыннусем.

1946.

## ТУПМАЛЛИ


Шăллăм . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Çырă куçăм, ылттăнăмçăм, чунăм . . . . 13
Вăрçă кăварĕ витĕр вăркăнатăп . . . . . 15
Симĕс пĕлĕте витсе, хаяррăн . . . . . . 17
Çумăр . . . . . . . . . . . . . . . . 19
Карта-карта кикак-кикак хуркайăк . . . 20
Карта-карта кикак-кикак хуркайăк . . . 21
Чĕре хытсассăн та . . . . . . . . . . 22
Асап сахал-и пирĕн çул çинче . . . . . 23
Çыру . . . . . . . . . . . . . . . . 24
Ирхине вăраннă шăпчăк . . . . . . . . 26
Сап-сарă çулçăсем вĕçсе . . . . . . . 28
Шанчăк . . . . . . . . . . . . . . . 30
Украинăри пĕрремĕш фронтра çапăçакан чăвашсен юрри . . . . . . . . . . . . . 33
Чап . . . . . . . . . . . . . . . . . 36
Каччă . . . . . . . . . . . . . . . . 40
Прага . . . . . . . . . . . . . . . . 43
Чăваш чĕлхи . . . . . . . . . . . . . 46
Винтовка . . . . . . . . . . . . . . 49
Висла . . . . . . . . . . . . . . . . 51
Кăмăллă хыпар . . . . . . . . . . . . 54
Кĕреке юрри . . . . . . . . . . . . . 60
Атăл çинчен хунă юрă . . . . . . . . . 62

Цена 3 рубля.

*ЯКОВ УХСАЙ*

# СОЛДАТСКАЯ КНИГА

на чувашском языке

*ЧУВАШГОСИЗДАТ*
*Чебоксары — 1947*